Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ял çыннине хуçалăх шăпи пăшăрхантарать

Йăлана кĕнĕ тăрăх районта апрелĕн 19-мĕшĕнче пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Ку хутĕнче ăна пысăк та пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явассине халалланă. Çаксем вĕсем республика Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă «Вăхăта хакламалла, çынсемшĕн ĕçлемелле» Çырăвĕ тата республика Патшалăх Канашĕн юлашки сессийĕнче пĕрремĕш вулавпа йышăннă «Чăваш Республикин 2020 çулчченхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн Стратегийĕ» саккун проекчĕ.

Районти çынсемпе тĕл пулма, çак пĕлтерĕшлĕ документсемпе паллаштарма, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») парти пуçаруçă пулса тăракан сумлă ĕçсем пирки каласа пама, çынсен шухăш-кăмăлне пĕлме, вĕсен ыйтăвĕсене шута илме тата хуравлама района ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов, РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, РФ Юстици министерствин суд экспертизин республикăри лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов килчĕç. Вĕсем ушкăнсене пайланса районти ответлă ĕçченсемпе пĕрле Ярапайкасси, Москакасси, Ярославка ял тăрăхĕсенче пулчĕç, ку территорисенче вырнаçнă культура, вĕрентӳ, сывлăха сыхлассин учрежденийĕсене çитсе курчĕç, ку ял тăрăхĕсенчи тата Муркаш ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕсен ларăвĕсен, пенсионерсен районти пухăвĕн ĕçĕсене хутшăнчĕç.

Пĕрремĕш ушкăна ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов ертсе пычĕ. Унпа пĕрлех район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов, выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕ Н.С. Яковлев Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пулчĕç.

Тӳрех каламалла, вырăнта лару-тăру çăмăлах мар. Тĕп ыйту кунта пĕрлешӳллĕ хуçалăх – «Лидер» агрофирма, унăн малашлăхĕ пирки. Агрофирма ертӳçи Э.В. Мочалов тĕлĕшпе сутлашу ĕçĕсем пынине чылайăшĕ пĕлет ĕнтĕ. Харпăрлăх ыйтăвне татса панă çĕрте, финанс тĕлĕшпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ теме иртерех пулĕ. Мĕн туни тĕрĕссипе тĕрĕс маррине суд татса парĕ. Анчах та суд пуласса кĕтсе паянхи кун пирки те манма юрамасть. Умра – çур аки.

Ертӳçĕне суд йышăнăвĕ пуличчен ертсе пырас ĕçрен хăтарнă. Ку ĕçе вăхăтлăх агрофирмăн тĕп бухгалтерĕ О.А. Шишкина туса пырать. Чăн ертӳçĕ, ответлă çын çук та темелле. Çавăнпа та ĕçсем малалла кайса пыни курăнмасть. Ытларах юхăнчăк куç умне тухса тăрать.

Тем тесен те вара çак чăнлăха никамран та пытараймăн. Унччен сĕт сăвассипе, выльăхсене ӳт хуштарассипе ыттисемшĕн тĕслĕхе лартнă хуçалăх паян хӳрере çапкаланать. Сĕт-çу ферминче 82 пуç, сыснасен ферминче 100 пуçа яхăн выльăх юлнă. Сыснасем валли фуражлăх тырă юлман. Сутма самăртнă выльăхсем çук.

Тĕп бухгалтер пĕлтернĕ тăрăх, хальлĕхе хуçалăх пурлăхне арестлемен. Апла пулин те хĕл каçа суд приставĕсемпе тĕрлĕ ыйтусене татса пама ăш пиçнĕ. Унччен илнĕ кредитсене тӳлесе татас пулать. Тĕрлĕ çулйĕр шырама тивет.

Халĕ вара çур аки ĕçĕсене ирттересси пирки. Ял çыннисенчен хăшĕсем: «Кăçал пирĕн хуçалăхра пĕтĕм çĕре пусу хăвармаççĕ-ши»,– тесе каланинче шӳтлесе калаçнинчен ытларах йĕплесе калани пулĕ. Паллă ĕнтĕ, тĕрĕслĕхпе тĕрĕс марлăх пирки сăмах вакласа ял çынни нимсĕр тăрса юлма пултарать. Кирлĕ чухлĕ тырă, ытти культурăсене акса-лартса хăвараймарăн пулсан, выльăхсен йышне те сыхласа хăварма май килмĕ. Выльăх çук пулсан вара укçа-тенкĕ туса илмелли çăл куç та хупăнать. Çавăнпа та пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем ял тăрăх депутачĕсен Пухăвĕн ларăвне хутшăннă май та, хуçалăхри тĕрлĕ производство объекчĕсенче пулнă чух та çак задачăна татса парассине паянхи куншăн чи пĕлтерĕшли тесе палăртрĕç – тем пулсан та çур аки ĕçĕсене ирттерес пулать. А.Н. Иванов палăртнă май, 200-300 гектар та пулин тырă акса хăвармасăр тытăнса тăма май çук. Ĕçлекенсене укçан тӳлеме май пулмасан пухса кĕртнĕ тырăран уйăрса памалла та калаçса татăлма пулать.

Вырăнти лару-тăру Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне А.И. Кудряшова та канăççăрлантарать. Вăл каланă тăрăх, 7 механизатор таран ĕçе явăçтарма пулать. Халех мĕн пур-çук техникăна ĕçе кӳлĕнтермелле. Çурхи ĕçсем районти хăшпĕр хуçалăхсенче тытăнчĕç те ĕнтĕ. Вырăнти депутатсен, специалистсен те çурхи ĕçсене йĕркелесе пырассинчен аякра юлма юрамасть.

Ĕçлĕ тĕл пулусем Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче те, кунти вăтам шкулта та, ытти çĕрте те пулса иртрĕç. Çынсене хумхантаракан ыйтусем пур, çук мар. Акă, вырăнта ĕç тупма май çуккипе хăшĕсем Шупашкара ĕçлеме çӳреççĕ. Çул укçине саплаштарма хула пасарĕсенче сутма тăпăрч-çу тавраш илкелесе кайнă унччен. Халĕ вара пасарсенче килти хушма хуçалăх продукцине сутма чарни кĕсьене пырса тивет.

Çĕнĕ урамра пурăнакансен хăйсен проблеми. Ку урама электричество линийĕ мехпаркран пырать. Хуçалăхăн парăмсем пур пирки мехпарка электричество парса тăрассине тăтăшах чараççĕ. Çавна пула кунта пурăнакансен нуша курма тивет.

Ыйтусем шкул патĕнче автомашинăсем çулпа çӳрессин хăвăртлăхне чакарасси, тасатмалли сооружени пирки те, ытти тĕлĕшпе те пулчĕç. Анчах та пурне те шухăшлаттаракан тĕп ыйту – хуçалăх шăпи.

**В. ШАПОШНИКОВ.**





**Сăн ӳкерчĕксенче: ĕç пӳлĕмĕнче çеç мар, урам хушшинче те калаçмалли тупăнчĕ; В.Н. Любимова пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн ĕçĕхĕлĕпе паллаштарать.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Çынсене мĕн хумхантарать

**Пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче иртнĕ Пĕрлехи информаци кунĕнче граждансенчен йышăннă ыйтусен хуравĕсем**

***Граждансен газификацие çыхăннă тăкакĕсене саплаштарĕç-и? (Отаркка ялĕн газификацийĕн подрядчикĕ – “Моргаушская” ПМК).***

**Муркаш районĕнчи Отаркка ялĕнче пурăнакансем.**

ЧР Строймин\u0115 çапла пĕлтерет: Муркаш районĕнчи Отаркка ялĕнче пурăнакансен урамри газопровод строительствипе çыхăннă тăкакĕсене саплаштарма 2007 çулта республика бюджетĕнчен 126 838 тенкĕ уйăрнă. Хальхи вăхăтра Строймин ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕн проектне хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн халăхăн газификаци тăкакĕсене саплаштарма республика бюджетĕнчен укçа уйăрмалли правилăсем çинчен калакан йышăнăва улшăнусем кĕртмелле. Çак йышăнăва тунă хыççăн укçа-тенкĕ Чапаев ячĕллĕ ЯХПК урлă тавăрса парĕç.

***Мĕншĕн вĕрентекенсене пĕлĕве ӳстермелли курссене кайнă май командировка тăкакĕсене тӳлемеççĕ?***

**Муркаш районĕнчи Юнкă шкулĕн вĕрентекенĕсем.**

ЧР Вĕрентӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх, вĕрентекенĕн командировка тăкакĕсене (талăклăх укçа, çул укçи тата пурăннăшăн) ăна командировкăна яракан организацин саплаштармалла. Паллах, пĕлĕве ӳстермелли курссенче пулнине ĕнентерекен мĕн пур документа тĕпе хурса. Муркаш районĕнчи Юнкă шкулĕн вĕрентекенĕсен ыйтăвне район администрацийĕн вĕрентӳ управленийĕн органне панă, министерство тĕрĕслесе тăрать. Педагогсене районти вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ хурав парĕ.

Районăн паллă çыннисем

# Муркаш пики Чул хула музейĕнче



Чулхулари художество промыслисен музейĕнчен тав çырăвĕ килчĕ. Ку хыпар пирĕн район çыннисемшĕн те кăмăллă пуль тетĕп. Çырура йывăçран касса ăсталанă 70 см çӳллĕш “Моргаушка” ятлă пикене музее ĕмĕрлĕхех упрама йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

Çав тери нумай ĕçлĕ кунсем пулчĕç иртнĕ çулăн сентябрь уйăхĕнче. Пĕр вăхăтрах Шупашкарта халăх ăстисен, Мускавра творчество çыннисен конкурсĕсене йĕркелерĕç. Вăл вăхăтрах пирĕн района Пĕтĕм Раççейри культура министрĕсем килмеллеччĕ. Унта та кунта выставкăллах хатĕрленме тиврĕ. Анчах хамах айăплă пултăм пуль ĕнтĕ – темиçе урхамаха хăваларăм. Пĕрне те ырăпа тытаймарăм.

Турри пулăшатех пулмалла. Сентябрь уйăхĕнчех тата Чулхулара пĕтĕм çĕршыври йывăç эреш ăстисен “Древо-2006” конкурсĕ уçăлчĕ. Чăвашсенчен Çĕнĕ Шупашкарти В.Н. Даниловпа иксĕмĕре чĕнсе çыру килчĕ.

Культура министрĕсемпе Атапай ялĕнче тĕл пулу ирттернĕ хыççăн, пĕр хатĕрленмесĕр, киле кĕмесĕрех “Древо-2006” конкурса тухса кайрăм. Пĕр кун кая юлса çитрĕм пулин те, аван йышăнчĕç Чулхулара. Выставка уçăлчĕ.

Вăрăм та сарлака сухаллă скульпторсене тата вĕсен чаплă ĕçĕсене курсан, çавăнтах анса ӳкеттĕм. Шупашкар конкурсне кĕме тивĕç пулайманскер, Раççей шайри талантсемпе ăмăртасшăн, намăс курни кăна пулмĕ-ши, ыйтрăм эпĕ хамран.

Çапах та “мĕн пуласси пулĕ” чăваш сăмахлăхĕ хавхаланса ĕçе кӳлĕнме пулăшрĕ. Курма пыракансем умĕнче художниксем традициллĕ тата хальхи вăхăтри авторлă росписьпе ĕçлеççĕ. Рельефлă тата витĕр касса эрешлекенсем хăйсем хушшинче ăмăртаççĕ. Эпир резчик-скульпторсем вара йывăç муклашкисене чутлама тытăнтăмăр, фотокорреспондентсем, телерепортерсем пире апларах та капларах ларма, тăма ыйткалани тата ăнăçлăрах ĕçлеме кăна пулăшрĕ. Малтанах эп касакан туратлă йывăç ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлмастчĕ. Конкурс вăхăчĕ çурринчен ытла иртсен, жюри членĕсем ман патра ытларах чарăнчĕç. Тема епле çурални пирки, чăваш халăхĕ çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пикенчĕç.

Эпĕ Муркаш районĕнче çуралса ӳснĕ, çавăнпа та хамăрăн район пурнăçне çутатса сăнарласа пани пахарах терĕм.

Пушкăрт скульпторĕпе Я.И. Клысовпа иксĕмĕр хушшинчи ăмăрту ăнăçлăрах пырать иккен. Янузак Ишбердович авалхи патшасемпе, чиркӳсемпе çыхăннă темăпа ĕçлет. Манăн тутăрлă пике те Янузакăн икĕрлĕ портретне аван хăвалать курăнать. Турри пулăштăр кăна!

Акă кульминаци вăхăчĕ те çитрĕ. Чылай художник дипломсемпе парнесем илсе савăнчĕ. Ман ĕçтеш В.Н. Данилов йывăç çинче рельеф меслечĕпе ĕçлекенсем хушшинче чапа тухрĕ.

Скульптура – конкурсăн чи кăткăс номинацийĕ. Унта мала тухаканни пĕтĕм конкурс çĕнтерӳçи пулать. Барнаул, Энгельск, Междуреченск, Старый Оскол, Урень, Лукоянов тата ытти хуласенчи скульпторсене дипломсем парса иртсен ман чун вырăнтан тапранчĕ. Клысов виççĕмĕш приз илчĕ. Муркаш пикине, чĕрессемпе, кĕвентепе ярăнса пыраканскере, пĕтĕм конкурсра çĕнтернине пĕлтерчĕç. Ăшăмри унччченхи пăшăрханусем халăхăн алă çуппи ăшне путса савăнăçлă çуталса çиçрĕç.

Халĕ ĕнтĕ çак икĕ кун хушшинче çуралнă композици документсемпех, пичет урлă “Моргаушка” ят илсе, Чулхулари музейра вырăн йышăнчĕ. Пирĕн хыçри ытти ăрусене те Муркаш ятне аса илтерсе тăрĕ вăл.

Культура министрĕсем килсе кайнинчен те йĕрсем çаврăнса çитрĕç. Акă Мускав облаçĕн министрĕ Г.К. Ратникова çак эрнере хыпарларĕ. Чăваш Енрен Мускава кайнă чух Атапайри выставка çинчен аса илсе калаçса кайрăмăр, тет. Нумай шухăш-кăмăлсем çуралчĕç, тет. Галина Константиновна малашне пирĕнпе творчествăлла çыхăну çĕнетсе ярасшăн.

Унăн татăклă сĕнӳсем те пур. Йывăç эрешĕпе эскизсем хатĕрлеме ыйтать. Хаваспах килĕшрĕм.

**Петр МАЗУРКИН.**

**Йывăç эреш ăстисен пĕтĕм Раççейри виççĕмĕш конкурсăн çĕнтерӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Моргаушка» пике тата П. Мазуркин (варринчи) Чулхулари историпе халăх промыслисен музейĕн директорĕпе Н. Панфиловапа тата пай ертӳçипе М. Бойкачевпа.**

Сывă пурнăç йĕркишĕн

## Ĕçкĕ-çикĕ тесен...

Тем тĕрлĕ сăлтав та тупаççĕ хальхи вăхăтра эрех сыпса пуçа минретес тесен: çуралнă кун-и, сысна пусаççĕ-и. Чăх пуссан та тепĕр чух тепĕр ĕçкĕ. Усал шĕвек чылай çын пуçне çирĕ ĕнтĕ. Ырă япалах мар кун пек пурăнни. Пăхатăн та, пурăнмалли мĕн чухлĕ çын вилсе пĕтрĕ çак йăларан хăпаймасăр. Кун пекех пурăнни ырри патне илсе çитерес çук.

Ĕçекен çыннăн вара эрех шырама инçе кайма кирлĕ мар. Кашни ялтах кун пек спиртлă шĕвек сутакансем тупăнаççĕ. Хакĕ те магазинри пек хаклах мар. Пуçа килсе пултăр. Кун пирки тивĕçлĕ мерăсемех йышăнни туйăнмасть.

Кун-çул уттипе утнă май пĕрмай шухăшлатăп. Иртнине аса илнĕ май вара чунтан тĕлĕнетĕп. Пирĕн ялта эп астăвасса никам та эрех ĕçсе айкашса пурăнман. Ĕçке ярăннă çынна халăх питленĕ, канăç паман, ирĕке яман.

Ку ĕлĕкрех пулнă ĕнтĕ. Халĕ вара ĕç-пуç еплерех-ха. Шухăшласа пăхар. Питĕ хăрушă иккен ку инкек. Этемшĕн эрех тăшманпа пĕрех.

Нумаях пулмасть Уйкас Янасаленче çине-çинех темиçе çын «леш тĕнчене» ăсанчĕ. Пĕрине пытарни 40 кун çитиччен тепĕр çын вилме ĕлкĕрет. «Симĕс çĕлен» сĕтĕрет те сĕтĕрет эрех черкки ăшне путнисене.

Çынна эрех тĕп тăвать. Асрах тытасчĕ çак чăнлăха яланах. Ĕçкĕне пула ăслă-тăнлă çын та ухмаха тухать. Эрехрен ыррине кĕтме çук. Çавăнпа черкке пирки манасчĕ.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

Кĕртекасси ялĕ.